Килти хушма хуçалăх

Шаптак хурĕ ылтăн медаль çĕнсе илчĕ

Кашни çулах çуркунне çитнине палăртса сăрт çамкисем юртан тасалма пуçласан, Чулхула облаçĕнче ĕлĕкхи йăлапа хурсен çапăçăвне ирттереççĕ. Иртнĕ канмалли кунсенче çакăн пек ăмăртусем кунти Каликино поселокĕнче тата Павлово хулинче пулчĕç.

Пирĕн районтан та çак ăмăртăва хутшăнакансем тупăнчĕç. Çав тери хумхануллă та кăсăклă иртрĕç хурсен "хăй камлăхне" кăтартасси. Каликино ял тăрăхĕн администрацийĕн çурчĕ умĕнчи тŭремлĕхре çĕре яхăн автомашина пухăнчĕ. Тавралăх куç умĕнчех чĕрĕлĕх хумĕпе тулса пычĕ. Кашни машина çинчен ятарласа ăсталаса тунă читлĕхсене антарнă май уяв шавĕн вăй-хăвачĕ ŭссех пычĕ. Ахаль те шавлă хурсен уçă сасси тŭремлĕхе чуна тыткăнлакан шавпа тултарчĕ. Тŭремлĕхĕн ик енĕ те пĕр йышри ăратлă хурсен читлĕхĕсемпе тулса çитсен, Бор район администрацийĕн пуçлăхĕ А.И. Киселев ăмăрту уявне уçрĕ. Кайăк-кĕшĕке юратакансене иртнĕ çулта лайăх ĕçленĕшĕн, çамрăк ăрава тĕрĕс воспитани панăшăн, ĕçре çитĕнŭсем кăтартнăшăн Хисеп грамотисем тата виçшер пин укçан парне парса чысларĕ, ăшă сăмахсем каласа саламларĕ.

Шăп тăхăр сехетре микрофон умне ăмăртусен судйи тухса вĕсен уйрăмлăхĕсемпе паллаштарчĕ, тĕрлĕ регионсенчен килнисен списокне вуласа пачĕ.

Кĕçех администраци умĕнчи тŭрем вырăна хăйсен йăлана кĕнĕ йĕркипе икĕ мăшăр ушкăна кăларчĕç, ăмăртăва пуçларĕç. Çакăн пек мăшăр ушкăнсем нумай пулнăран, ăмăрту ĕçне хăвăртлатас тĕллевпе "командăсене" икĕ ушкăнпа çапăçтарма пуçларĕç. Пĕрремĕш тытăçу... иккĕмĕш ... пиллĕкмĕш ...

– Улттăмĕш çапăçу! – пĕлтерчĕ тĕп судья. – Чăваш Республики, Муркаш районĕ, Потапов Радислав Иосифович! – уççăн янăрарĕ шавлакан хурсен сассине çĕнтерсе микрофонран пĕлтерни. Эпир хăвăртрах читлĕхсенчен хамăр илсе килнĕ "тульски" ăратлă хурсене кăларса тŭремлĕхе ятăмăр. Пирĕн паттăр ют çĕртине пăхмасăр хăйĕн "гаремĕпе" çапăçу вырăнне мăнаçлăн утрĕ. Хăйсем пекех шавлă хирĕçекен ушкăн умне çитсе ирĕклĕ мел тупрĕ те икĕ çунатне сарса хăлхана çурасла кăшкăрса çапăçăва кĕчĕ. 25 минут тытăçнă хыççăн "тăшманăн" вăйсем пĕтнипе çапăçу хирĕнчен тухма тиврĕ, парăнчĕ.

Финалта та пирĕн "паттăр" мăнаçлă тытрĕ хăйне. Ăна çапăçура хавхалантарса пыракан ушкăнри икĕ тусĕ те хăйсен уйрăмлăхĕпе кураксенне тĕлĕнтерчĕç. Çапăçу вăхăтĕнчех чупачупа пырса "тăшмана" çунаттисенчен турткаларĕç, тĕкĕсене тăрмаларĕç. Финалти çапăçăва та вăхăт çитичченех вĕçлесе пирĕн паттăр "переходники" (пĕр çул та çурă) ушкăнра чи паттăрри пулчĕ. Ылтăн медальпе пĕр михĕ сĕлĕ парнене тивĕçрĕ. Унăн хуçине, Муркаш шкулĕнчи физкультура учительне Радислав Иосифович Потапова, диплом тата укçан парне парса чысларĕç. "Инçе çула кайса çŭрени харама каймарĕ", – кулкаласа калаçать Радислав Иосифович.

Инçе çула тухма вара Борис Арефьевич Васильев предпринимательпе Тойкилтĕ шкулĕнчи Алексей Петрович Степанов спонсорла пулăшу парса пулăшрĕç.

Потаповсем килте «тульски» ăратсăр пуçне «холмогорски» тата «линдовски» хурсене те усраççĕ. Çитес вăхăтра Радислав Иосифович ăратлă хурсене ĕрчетме, хушма хуçалăха аталантарма кредит илме шутлать.

Вениамин ФЕДОРОВ.

Сăн ŭкерчĕксенче: Р. Потапов çĕнтерŭçĕ-хурпа; хурсем вăхăта пушшăн ирттермеççĕ, çапăçма хăнăхаççĕ.

Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ŭкерчĕкĕсем.

Специалист канашĕ

Ĕне пăрулана хыççăн шалкăм çапни

Ку чирпе (послеродовой парез) уйрăмах ĕне пăрулана хыççăн малтанхи 1-2-мĕш кунĕсенче чирлет. Хăш-пĕр чухне пĕр-икĕ эрне иртсен те е пăруличчен малтанхи 1-2 кунĕнче тĕл пулать. Сурăхсемпе качакасем те пăранланă хыççăн ку чирпе чирлеме пултараççĕ. Уйрăмах сĕт вăйлă паракан ĕнесем чирлеççĕ.

Чирĕн малтанхи палли вара ĕне хăйне япăх туйнипе пуçланать. Вăл çиме пăрахать, хырăмлăхĕ ĕçлемест, хыçалти урисем çине пĕр енчен тепĕр енне пускалама пуçлать, пĕçĕ çинчи мышцисем чĕтреççĕ, вăйĕ чакать, вăл выртать. Выртнă хыççăн тăраймасть. Унăн юн пусăмĕ анса каять, температури 35-36 градуса çити чакать. Чир çăмăллăн иртет пулсан, выртнă чух мăйĕ S евĕрлĕ кукăр пулать, чир йывăррăн иртсен пуçне тăсса хурать. Куçĕсем сŭрĕккĕн пăхаççĕ, ĕне йывăррăн сывлать, пырне шалкăм çапать, çăтаймăи пулать. Кун пек чухне ĕнене çăвартан шыв е шĕвек эмелсем лама юрамасть, тип пыра кайсан ĕне вилме пултарать. Ĕнен çакăн пек чир паллисем пулсан çийĕнчех ветеринари ĕçченне чĕнмелле, кун пек чух вăл кăна тĕрĕс пулăшу пама пултарĕ. Вăхăтра пулăшу памасан ĕне сывлăш пŭлĕннипе вилсе кайма пултарать.

Ĕнесем çак чирпе ан чирлеччĕр тесен, вĕсене кашни кунах хĕвел çине уçăлма кăлармалла, ĕнесен рационне минераллă хутăшсем (пермаит, фелуцен) хушса памалла. Пăруличчен 45-60 кун малтан сума пăрахмалла. Çак вăхăтра вĕсене витаминпа (тривит, тетравит, элеовит) 2 хут укол тусан аван. Пăруличчен 2 эрне малтан тата пăрулана хыççăн 2 эрнерен çăнăх, кăшман çитерме пăрахмалла. Лайăх пахалăхлă утă кăна çитермелле. Пăруличчен пĕр эрне малтан тата пăрулана хыççăн пĕр эрне кайран шăварнă чух кашни кун шыва 200-300 грамм сахăр хушса пани те ĕнесене шалкăм çапассине чакарать.

Т. ЛЬВОВА,
Шурчари ветеринари участокĕн заведующийĕ.

Пĕлес килет-и?

Çăмартасене мĕнле каластармалла?

Çăмартана пуслăх чăххи айне хурса паричченех вăл чĕпĕллĕ е тăрă иккенне пĕлме пулмасть-ши?

Пуслăх чăххи ларичченех мар, вăл ларни 5-6 кун иртсен çăмарта тăрă е тăрă маррине палăртма пулать.

Çакна пĕлме хытăрах хут таткине трубка пек туса чĕркемелле, унăн шал енне тĕттĕм тĕспе сăрламалла. Трубкăн тăршшĕ 13-15 см, сарлакăшĕ пĕр вĕçĕнче 5 см, тепринче 3,5 см пулмалла. Унăн ансăр вĕçне куç тĕлне, сарлака вĕçне – шĕвĕр енĕпе аялалла тытнă çăмарта патне илсе пымалла. Çăмартана хутран тунă трубкăпа пăхнă чухне çавăркаламалла.

Çăмарта чĕпĕллĕ пулсан унта тĕвĕ (зародыш) пĕтĕм еннелле майĕпен пыракан çиплĕ, тĕттĕм пăнчă курăнмалла. Çăмартана çавăрнă май унти тĕвĕ те (зародыш) та çаврăнмалла.

Çăмарта тăрă пулсан унта тĕвĕ (хура пăнчă) курăнмалла мар. Унта витĕр курăнакан çăмарта шурри тата сарри çеç пулмалла. Ун пек çăмартасене илсе урăх тĕллевпе усă курмалла. Анчах та илнĕ çăмартасем вырăнне урăххисене ан хурăр.

Тухтăр канашĕ

Хамăрăн сывлăх – хамăрăн алăра

Кашни çынах çутă тĕнчене телей курма çуралать. Сывлăх çирĕп пулсан, чуна килĕшнĕ ĕçре вăй хурсан, çемьере килĕшŭпе ăнланулăх пулсан çынна урăх мĕн кирлĕ. Шел пулин те, пур чухне те пурнăçра эпир шутланă пек пулса пымасть, кĕтмен-туман çĕртенех йывăр чир çыпăçать, организма сиенлесе сывлăха хавшатать. Çакăн пек чирсенчен пĕри вăл – туберкулез. Халăхра ăна "чахотка" теççĕ.

Пирĕн çĕршывра çулсеренех çак йывăр чирпе кĕрешме "Шурă ромашка" ятпа уйăхлăх ирттереççĕ. Кăçал вăл мартăн 20-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 20-мĕшĕччен иртет. Ăна тахçанах, иртнĕ ĕмĕрте революцичченех, халăх сывлăхне упрама чиртен асăрхаттарма ирттернĕ. Ун хыççăн тĕрлĕ сăлтавсене пула вăл пăрахăçланнă. 21-ĕмĕрти 2000 çултан тытăнса çак операцие çĕнĕрен ирттерме пуçланă. Унăн сăлтавĕ те паллă, мĕншĕн тесен халăх сывлăхĕ – çĕршывăн чи хаклă пуянлăхĕ.

Муркаш районĕнче те çынсене туберкулез чирĕнчен сыхлас, ăна вăхăтра тупса палăртас тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем туса ирттеретпĕр. Сăмахран, тин çеç çуралнă ачасене çак чиртен упрама БЦЖ прививкисене тăватпăр. Тĕрлĕ сăлтавсене пула, кирлĕ пулсан, 7-14 çулхи ачасене çак прививкăна тепĕр хут тума тăрăшатпăр. Çитĕнекен ăру сывлăхлă пултăр тесе ачасене Манту реакцине лартса тĕрĕслетпĕр.

Çитĕннисене флюорографи аппарачĕпе пăхса вĕсен ŭпкисем мĕнле пулнине тĕрĕслетпĕр. Иртнĕ çулта, сăмахран, района пурăнакан çынсен 68 процентне çак аппаратпа тĕрĕсленĕ. Чирлисене тупса палăртсан вĕсене республикăри туберкулез диспансерне ярса тĕрĕслетпĕр, хыççăн та вĕсен сывлăхне тĕрĕслесех тăратпăр.

Çак мероприятисем туберкулез чирĕпе кĕрешес енĕпе пысăк пулăшу параççĕ. 2006 çулта, республикăрипе танлаштарсан, пирĕн районта чирлеслĕх чакнă (республикăра ку кăтарту 10000 çын пуçне 70,3 пулсан, пирĕн районта – 68,1). Çавăн пекех районта туберкулез чирĕнчен вилекенсен хисепĕ те республика кăтартăвĕнчен чылай пĕчĕкрех (13,7-5,4). Халхи вăхăтра пирĕн районта туберкулезăн активлă формипе чирлекенсем 51 çын, вĕсем пурте учетра тăраççĕ.

Çак хăрушă чир çынна мĕнле ерет-ха? Нумай чухне вăл сывă çынна чирлĕ çынран ерет, уйрăмах чирлĕ çын хытă калаçнă, ŭсĕрнĕ е сунаслана чух унăн çăра сурчăкĕ урлă. Çавăн пекех туберкулез чирлĕ çыннăн япалисем, чашăк-тирĕкĕ урлă е чуптусан та ерме пултарать.

Ĕнчен те чирлĕ çын ятарласа хатĕрленĕ савăта мар, урайне е çĕре сурать пулсан, сурчăкĕ типет, туберкулез бациллисем юлаççĕ. Вĕсем тусанпа пĕрле сывлăша саланаççĕ. Çак сывлăшпа сывласан сывă çынна та чир ерет. Туберкулез бациллисем питĕ çирĕп, вĕсем сывлăшра çулталăк хушши е ытларах та пурăнаççĕ. Çавăнпа та чирлĕ çыннăн ăçта май килнĕ унта сурма юрамасть, ятарлă савăтпа кăна усă курмалла, мĕншĕн тесен ку уйрăмах унпа юнашар пурăнакан çынсемшĕн çав тери хăрушă. Сурнă чух çак сăлтавсене пулах сăмса тутрипе усă курма юрамасть. Çакна та асра тытăр: çитĕннисемпе танлаштарсан, туберкулез ачасемпе çул çитмен çамрăксене хăвăртрах ерет. Çавăнпе вĕсене чирлĕ çын патне яма, унпа хутшăнтарма, унăн япалисемпе усă курма юрамасть. Çулталăка çитмен ачасене çак чиртен упрасси çине уйрăмах тимлĕ пăхмалла.

Чирлĕ çынна уйрăм пŭлĕме вырттарсан аван. Ун пек май çук пулсан, вăл вырăна ширма лартса картламалла. Вăл усă курнă япаласене 2 процентлă сода ирĕлчĕкĕпе (1 литр шыв çине 1 апат кашăкĕ) ятарлă савăтра 15 минут хушши вĕретмелле е 5 процентлă хлорамин ирĕлчĕкне (1 литр вĕри шыв çине 3 апат кашăкĕ хлорамин) 6 сехет хушши тытмалла. Ялсенче çăра сурчăка уборнăйсене тăкмалла мар, хутпа чĕркесе çунтармалла.

Çакна та палăртса хăвармалла. Çителĕксĕр апатланни, пурăнмалли условисем япăх пулни, хуйхă-суйхă, тарăхни, эрех ĕçни, пирус туртни, СПИД (ВИЧ), вăраха каякан чирсемпе (ŭпке, сахăр, язва чирĕсем) чирлени те туберкулеза аталанма пулăшакан сăлтавсем. Уçăлтарман, тусанлă пŭлĕм туберкулез бациллисене аталанма пулăшать. Çакна асра тытăр.

Ĕнчен те эсир виçĕ эрне е унран та ытларах ŭсĕрсе пурăнатăр, начарланса пыратăр, ŭт температури яланах пысăк, çĕрле тарлатăр, кăкăр тĕлĕнче ыратать пулсан, апат анмасан, хăвăра япăх, вăйсăр туятăр пулсан, юнлă сурсан, пĕр тăхтамасăр участокри врач патне васкăр. Вăл сире сывлăхăра тĕрĕслеттерме кирлĕ сĕнŭсем парĕ.

Туберкулез чирĕнчен сывалас тесен çакна асра тытмалла. Çырса панă мĕн пур эмелсене врач пăхса-сăнаса тăнипе сиплев курсĕ вĕçленичченех ĕçмелле. Вăл тапхăр ултă уйăх е унран ытларах та тăсăлма пултарать. Сиплев вăхăтĕнче врач çырса панă эмелсене ĕçме пăрахни туберкулез бациллисене çав эмелсене хăнăхма май парать. Ун пек чухне чир тепĕр хут татах та йывăртарах пуçланать, унран сипленме питĕ йывăр пулать, тепĕр чухне май та пулмасть. Врач сĕнĕвĕсене итлесе тĕрĕс, йĕркеллĕ сипленсен, эмелсене вăхăтра ĕçсе тăрсан çак чиртен сывалма пулать. Туберкулез чирĕнчен сиплесси икĕ тапхăрпа иртет. Пĕрремĕшĕ республикăри туберкулез чирĕсенчен сиплекен диспансерта 2-4 уйăх таран тăсăлать. Иккĕмĕш тапхăрĕ районти фтизиатр сăнаса тăнипе районта иртет, вăл 4-5 уйăх пырать. Сиплев тĕрĕс ирттĕр тесен, унччен 2-3 уйăх эмелсем ĕçнĕ хыççăн 5 уйăхран, юлашкинчен, сывалас умĕн тепĕр 6-8 уйăхран, çăра сурчăка (манка) тĕрĕслеттерсе тăмалла.

Туберкулезпа чирлĕ çынран вăл урăх çынна ан ертĕр тесен, ŭсĕрнĕ е сунаслана чух аяккалла пăрăнса тутана сăмса тутрипе хупламалла, уйрăм савăтпа, алшăллипе, вырăн хатĕрĕсемпе кăна усă курмалла.

Юлашки çулсенче медицина малалла вăйлăн аталанса пырать. Çакна хамăр районта та лайăх курма пулать, мĕншĕн тесен больницăсем çĕнĕ оборудованисемпе пуянланаççĕ. Ку вара чирсене вăхăтра тупса палăртма тата вĕсенчен сыватма нумай пулăшать. Пирĕн район больницине те, наци проекчĕпе килĕшŭллĕн, рентген тăратмалли çĕнĕ аппарат, Пĕтĕм тĕнчери банк урлă лаборатори оборудованийĕсем килчĕç. Ку вăл пирĕншĕн пысăк пулăшу.

Юлашкинчен çакна каласа хăвармалла. **Каларăм ĕнтĕ, мартăн 20-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 20-мĕшĕччен "Шурă ромашка" уйăхлăх иртет. Çак уйăхлăх вăхăтĕнче, тăватă шăмат кун, Муркашри тĕп больницăра "уçă алăксен кунне" ирттеретпĕр. Ун чухне, çав кунсенче, ирхине 9 сехетрен пуçласа 13 сехетчен флюорографи аппарачĕ тата клиника лабораторийĕ ĕçлеççĕ, фтизиатр та чирлисене йышăнать.**

Сывлăх – чи хаклă пуянлăх. Ăна тем чухлĕ укçа пулсан та туянма пулмасть. Çавăнпа хăвăра, ыттисене те упрăр, асăрхануллă пулăр, сывлăха вăхăтра тĕрĕслеттерсе тăрăр, врач сĕнĕвĕсене йĕркеллĕ пурнăçласа пырăр.

О. ПОПОВА,
райфтизиатр.
Г. СОКОЛОВА,
врач-эпидемиолог.